## ИШЕКЕЛЛЕ

— Ăçта каятăн?

— Тпру! Ишеке. Карчăк варпа аптрарĕ. Микулай турă тытрĕ пулĕ терĕмĕр. Çурта лартсан, иртсе каймĕ-ши?

— Çук. Кăçалхи çул Микулнă турă та нимех те тăваймĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха, хăта!

— Мĕн тĕлĕнтермелли, çветойсем пăрахăçа тухнă тесе калать, тет. Илтмен-и эсĕ вăл йĕркене?

— Хăта, эсĕ пĕчĕк ача мар-çке? Мĕн лĕпĕртететĕн, çветойсем ăçтан пăрахăçа тухаççĕ?

— Мĕн лĕпĕртетмелли? Ĕненместĕн пулсан, çынсенчен ыйт. Каласан, каламасан та паллă: кантурта та, шкулсенче те пĕр çветой та хăварман, шалт тасатнă.

— Турă çырлахах! Ытла эрне каç тĕлленсе выртатăп. Çĕрпӳ хули çунать пек. Урам туллиех çын утать пек. Паян пасар мар-çке, мĕн çынĕ утать, ара, ку тетĕп пек. Унтан çумăр çăвать пек. Çумăр та мар, темскерсем утаççĕ-вĕçеççĕ пек... Эпĕ: мĕн? — тетĕп. Куратăп ĕнтĕ. Эх, турăран килешшĕ! Хăта, пăх-ха, кам ара ку килет?

— Эй, çул парăр!

— А-а, Çитăр пичей! Здорово! Ăçта кайрăн?

— Советран килетĕп.

— Советран пулсан, тăхта-ха, пĕр сăмах ыйтам?

— Тпру! Мĕн ара?

— Мĕн, чăнах советсенчен çветойсене кăларнă-и?

— Кулмалла ыйтатăр эсир: советра çветойсем пулман та. Буржуйсем пулкаланă, чăнахах. Анчах халĕ советран вĕсене тасатнă.

— Сан, Çитăр пичей, кулса пултăр! Эсĕ чипер пуллеха. Ара, кантуртан, шкулсенчен, комитет беднотысенчен турăш чиккисене йăлтах илнĕ, тет. Чăнах-и вăл çапла?

— Чăн.

— Çитăр пичей, апла ăçтан май килет?

— Сан шутпа май килмест те, пирĕн шутпа май килет. Мĕншĕн тесен кантура турра пуççапма каймаççĕ. Пуççапас килсен, чиркĕве каяççĕ.

— А эпĕ, хăта, тата хам ухмах ăспа шухăшлатăп: апла еннелле кайсан тĕнче пĕтмĕ-ши?

— Мĕншĕн пĕтет? Пĕтмест. Турăн тĕнчепе ĕçĕ те çук.

— Епле çук?

— Çук çав. Тĕнчене турă пăхса пураннă пулсан, пирĕн çавнашкал хăрушă вăрçăсем пулас çук; эпир те ĕлĕкренпех ирĕклĕ, таса çынсем пулмалла.

— Апла!..

— Çапла çав, çапла. Эсĕ халь ху ирĕке тухнине те чухлаймастăн курăнать. Халĕ эпир светойсемсĕрех ирĕклĕ. Вĕсен кĕллипе ирĕке тухаймарăмăр, революци хăвачĕпе çеç тухрăмăр. Çак йĕркене тытса тăрсан тата ирĕке тухатпăр. Халĕ пур çĕрте те революци çуралать. Хăçан та хăçан пĕтĕм тĕнчери патшасене пĕтеретпĕр, çавăн чух вара социализм тăватпăр.

— Мĕскер вăл социализм? Çимелли-и вăл?

— Çук. Социализм вăл çĕнĕ йĕрке. Вăл йĕркепе пурте пĕр тан пулмалла. Нумай пуплеме вăхăтăм çук. Пуплес килет пулсан, хам патăма киле пырăр. Сывă пулăр! Но-о!..

— Сыв пул-ха, Çитăр пичей!

— Пĕлес çук, пулĕ те пулĕ. Но-о! Каям-ха эпĕ Ишекеллех. Сыв пул, хăта!

— Сыв пул! Иртсе каятчен кĕрсе тух!..

1919